ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ ЯЛ ХУÇАЛĂХНЕ АТАЛАНТАРАССИ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КЁРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2024 çулхи чӳк уйăхĕн 29-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикинче ял хуçалăхне аталантарасси çинчен" 2014 çулхи авăн уйăхĕн 29-мĕшĕнчи 49 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2014, 9 №; 2015, 5 №; "Республика" хаçат, 2018, çĕртме уйăхĕн 27-мĕшĕ; 2019, нарăс уйăхĕн 20-мĕшĕ; 2022, çĕртме уйăхĕн 8-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 5 статьян 2-мĕш пайĕн 4-мĕш пунктĕнче "ĕç тăвакан влаçĕн органне" сăмахсене "ĕç тăвакан органне" сăмахсемпе улăштарас;

2) 6 статьян 1-мĕш пунктне ", агропромышленность комплексĕн сферинче патшалăх политикине туса хатĕрлес тата нормативлă право тĕлĕшĕнчен йĕркелесе тăрас ĕç-хĕле пурнăçлакан федерацин ĕç тăвакан власть органĕ çирĕплетнĕ переченьпе килĕшӳллĕн ял хуçалăх продукцийĕ шутне кĕмен продукцирен (чĕр тавартан) ветеринари тĕллевĕпе усă курма эмел хатĕрĕсем, выльăх-чĕрлĕх апачĕн тата апат-çимĕçĕн хушма продукчĕсем, ферментлă препаратсем кăларакан организацисене тата уйрăм предпринимательсене (малалла – ветеринари тĕллевĕпе усă курма эмел хатĕрĕсем, выльăх-чĕрлĕх апачĕн тата апат-çимĕçĕн хушма продукчĕсем,

ферментлă препаратсем кăларакан организацисем тата уйрăм предпринимательсем)" сăмахсем хушса хурас;

3) 7 статьян 1-мĕш пайĕнче:

а) 1-мĕш пункта:

çакăн пек çырса "в" çум пункт хушса хурас:

"в) ветеринари тĕллевĕпе усă курма эмел хатĕрĕсем, выльăх-чĕрлĕх апачĕн тата апат-çимĕçĕн хушма продукчĕсем, ферментлă препаратсем кăларакан организацисене тата уйрăм предпринимательсене;";

çакăн пек çырса "г" çум пункт хушса хурас:

"г) Федерацин "Ял хуçалăхне аталантарасси çинчен" саккунĕн 14^1 статйин 2-мĕш пайĕнче кăтартнă ытти организацисене;";

ă) çакăн пек çырса 13^1-мĕш пункт хушса хурас:

"13^1) ветеринари тĕллевĕпе усă курма эмел хатĕрĕсем, выльăх-чĕрлĕх апачĕн тата апат-çимĕçĕн хушма продукчĕсем, ферментлă препаратсем кăларакан организацисене тата уйрăм предпринимательсене пулăшасси;";

б) çакăн пек çырса 13^2-мĕш пункт хушса хурас:

"13^2) Федерацин "Раççей Федерацийĕнче вак тата вăтам предпринимательлĕхе аталантарасси çинчен" 2007 çулхи утă уйăхĕн 24-мĕшĕнчи 209-ФЗ №-лĕ саккунĕпе килĕшӳллĕн вак предпринимательсен субъекчĕсем шутне (хресчен (фермер) хуçалăхĕсене, потребительсен ял хуçалăх кооперативĕсене, ял хуçалăх продукцийĕ туса кăларакан уйрăм предпринимательсене кĕртсе) кĕртнĕ ял хуçалăх таварĕсем туса кăларакансен, çавăн пекех харпăр хушма хуçалăх тытакан гражданссен выльăх-чĕрлĕх фермисенче е ытти объекчĕсенче туса кăларакан ял хуçалăх продукцийĕн, чĕр тавар тата апат-çимĕç (çав шутра Федерацин "Ял хуçалăхне аталантарасси çинчен" саккунĕн 3 статйин 1-мĕш пайĕнче кăтартнă переченьпе килĕшӳллĕн органика продукцийĕн, ял хуçалăх продукцийĕн тата лайăхлатнă апат-çимĕçĕн, малтанхи тата ун хыççăнхи майпа (промышленность мелĕпе) тирпейленĕ ял хуçалăх продукцийĕн) рынокĕн инфратытăмне аталантарас ĕçе пулăшасси;";

4) 9 статьян 1^1-мĕш пайне çакăн пек çырса 4-мĕш пункт хушса хурас:

"4) ветеринари тĕллевĕпе усă курма эмел хатĕрĕсем, выльăх-чĕрлĕх апачĕн тата апат-çимĕçĕн хушма продукчĕсем, ферментлă препаратсем кăларакан организацисене тата уйрăм предпринимательсене.".

2 статья

1. Çак Саккун, çак статьяпа урăх вăхăтра вăя кĕртме палăртнă положенисемсĕр пуçне, ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

2. Çак Саккунăн 1 статйин 3-мĕш пункчĕн "а" çум пункчĕн тăваттăмĕш тата пиллĕкмĕш абзацĕсем тата "б" çум пункчĕ 2025 çулхи пуш уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа вăя кĕреççĕ.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ – О. Николаев

Шупашкар хули
2024 çулхи раштав уйăхĕн 3-мĕшĕ
89 №